Роспотребнадзор тĕрĕслевĕ

# Пасара каяр-и, паха тавар туянар-и?

Пасарсем пирĕн пурнăçра паллă вырăн йышăнаççĕ, мĕншĕн тесен эпир кашниех вăл е ку тавара туянма унталла çул тытатпăр. Акă августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа ваккăн сутмалли пасарсем тĕлĕшпе çĕнĕ саккун вăя кĕчĕ. Тĕрĕссипе вара çак цивилизаци тапхăрне таçханах кĕтнĕ темелле.

Саккунпа килĕшӳллĕн еплерех çĕнĕлĕхсем пулмалла-ха? Чи малтанах пасара кĕнĕ çĕрте ятарлă таблица курăнмалла. Унта вара пасар ячĕ, ĕç вăхăчĕ тата компани управляющийĕ пирки çырмалла. Малашне пасар хуçи компани управляющийĕ пулать. Унăн çакăн пирки район администрацийĕпе тивĕçлĕ килĕшӳ тумалла. Çавна май пасарти йĕркелĕхшĕн, тасалăхшăн, антитеррорла хăрушсăрлăхшăн туллин яваплă шутланать. Кашни пасарăн хăрушсăрлăх паспорчĕ тата чĕрĕ какай сутакансем валли ветлаборатори кирлĕ. Çӳлерех асăннисемсĕр пуçне кашни сутуçăн сăн ӳкерчĕк çыпăçтарнă, ятне туллин çырнă карточка пулмалла. Ял хуçалăхĕнче туса илнĕ тата кăларнă продукцисен ассортиментне пуян пулмалла. Раççей хресченĕсем, фермерĕсем, пахчаçисем хăйсем туса илнĕ продукцийĕсемпе сутă тăвакансен пасарти шайĕ 20-50 процент шутланмалла.

Çапах та çак çĕнĕлĕхсенчен пысăкрах тăкакли хăрушсăрлăх паспорчĕ шутланать. Çавна валли видеосăнав, металлодетектор, газоанализатор тата ытти техника кирлĕ. Унсăр пуçне компани управляющийĕн чылай яваплă документсем йĕркелемелле. Çакăнтах хĕллехи мелпе шыв пăрăхĕ тата канализаци кирлĕ. Енчен те çӳлерех асăннисем çук пулсан январь уйăхĕнчен пуçласа штраф тӳлетереççĕ.

Кусем пурте саккунпа килĕшӳллĕн пулмалли йĕркесем. Еплерех пурăнать-ха паянхи кун муниципаллă унитарлă предприяти “Муркаш” пасарĕ? Унăн хуçи Е. Субботин компани управляющийĕ пулса тăчĕ. Ун пирки вăл тивĕçлĕ документсене хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Эпир санитарипе эпидемиологи анăçлăхĕ тĕлĕшпе тата потребительсен прависене хӳтĕлессипе Раççей Федерацийĕн законодательствине мĕнле пурнăçлани пирки кашни уйăхрах суту-илӳ вырăнĕсене тĕрĕслетпĕр. Палăртмалла, тавар туянакан пахалăхлă, усă курма юрăхлă срокри тата сывлăхшăн сиенсĕр продукци туянма пултартăр. Пирĕн тĕп ĕç çавăнпа çыхăннă та ĕнтĕ.

Суту-илӳ павильонĕ 738 тăваткал метр йышăнать. Апат-çимĕç сутма 12 точка тата 2 магазин уçнă. Пасар территорийĕнче шывпа тивĕçтересси япăх мар, суту уйрăмĕнче шыв пăрăхĕ хунă, умывальник тата суту инвентарĕсене çуса тасатма икĕ ванна пур. Анчах та вĕри шыв çук. Суту-илӳ павильонĕ косметика юсавне ыйтать. Унти кĕтессем, стенасем, маччасем хуралнă. Çакă та 1066-01 СП 10.8 пунктне пăхăнманни шутланать.

Апат-çимĕçпе суту тăвакансем валли хывăнмалли пӳлĕм уйăрман. Вĕсен çиелти çи-пуçĕсем вара çакăнтах упранаççĕ. Çук йĕркесĕрлĕх те 2.3.6. 1066-01 СП 4.10 пунктне тĕпе хуманни çинчен калать.

Ĕç кунĕ вĕçленнĕ хыççăн пӳлĕме дезинфекци хутăшĕсемпе çуса тасатаççĕ, ку тĕлĕшпе пурнăçламалли инвентарь валли ятарлă пӳлĕм уйăрнă.

2007 çулта администрацивлă майпа йĕркене пăсни çинчен виçĕ постановлени çырма тивнĕ. Явапписен икĕ пин çурă тенкĕ укçана кĕсьерен кăларса хума тивнĕ.

Муркаш район территорийĕнчи тепĕр пасар вăл – Мăн Сĕнтĕр пасарĕ. Халĕ вăл вырсарни кунсенче кăна ĕçлет. Унăн шăпи вара самай йывăр.

– асăннă объектăн санитари правили тĕлĕшпе эпидемиологи пĕтĕмлетĕвĕ çук;

– автотранспорта чарăнса тăмалли вырăн çук;

– пасар территорийĕнче администраци пӳлĕмĕ çук, апат-çимĕçе автомашина çинченех сутаççĕ. Сĕтелсемпе лотоксен гигиена çивиттийĕ çук, холодильниксемпе тивĕçтермеççĕ. Хăвăрт пăсăлакан апат-çимĕç продукчĕсене (кăлпасси, сыр, сĕт-çу, аш-какай, пулă изделийĕсем) холодильниксенче упранмаççĕ;

– аш-пăшă, пулă чĕртаварне кăлпасси, сыр, çу продукчĕсемпе пĕрле пĕр сĕтел çинченех сутаççĕ тата пĕрлех упраççĕ;

– сĕт тата сĕт продукчĕсене усă курнă пластик савăтсенче сутаççĕ;

– аш ваклассине сутуилĕвĕн усă площадкинчех йĕркеленĕ, ăна урай çумне ятарласа çирĕплетмен;

– сутуçăсен тата предпринимательсен пĕр пайĕн медицина кĕнеки çук;

– инвентарьсене санитари тасатăвне тума услови çук, вĕри тата сивĕ шыв парса тăрассине йĕркелемен;

– суту тăвакансем валли раковина çук.

Санитарипе эпидемиологи законодательствин требованийĕсене пăсни Раççей Федерацийĕн КоАПĕн 14.4 ст. 2 пайĕпе администрацивлă майпа правăна пăснă пирки ятарлă протоколта çутатнă.

Çапла вара Мăн Сĕнтĕр пасарĕн шăпине уçăмлатма йышăнăва Муркаш район судне янă. Унăн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пасар ĕçне 60 кун таран чарса лартнă.

1999 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче йышăннă “Çынсен санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчи анăçлăхĕ” 52 № Федераллă саккунăн 11 статйипе килĕшӳллĕн юридици вăйĕпе çынсен санитари законодательствине пурнăçлассинчи тивĕçĕсене палăртнă. Унпа килĕшӳллĕн апат-çимĕç продукчĕсен, апат-çимĕç чĕртаварĕн тата ытти продуктсен вĕсене туса хатĕрленĕ, упранă, илсе килнĕ тата çынсене сутнă чухне санитари правилисене тивĕçтермелле. Граждансем, уйрăм предпринимательсем тата юридици вăйĕнчи çынсем те çак санитари правилисене пурнăçлама тивĕç.

Çӳлерех асăннă çитменлĕхсене пăхса тухнă май пасар ĕç-хĕлĕнче çынсен сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратма пултаракан сăлтавсем чăннипех те яр уççăн палăраççĕ.

Тĕрĕссипе вара çак çитменлĕхсем февралĕн 25-мĕшĕнче ирттернĕ тĕрĕслевре те аванах курăннăччĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе пасар ĕçне 60 кунлăха хупнăччĕ. Вăхăчĕ самаях иртрĕ темелле, анчах та ĕç-хĕл ырă еннелле туртăнни сисĕнмерĕ-ха. Çапах та пасар шăпи юсанасса шанас килет. Паянхи кун ăна ял-хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи Г.Г. Михайлов çирĕп алăна илнĕ. Халĕ вара унта саккунпа килĕшӳллĕн йĕркене кĕртес ĕçсем пыраççĕ.

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕн территори пайĕн специалист-эксперчĕ.**

## ГОРОСКОП

**17.08 – 23.08.2007**

***17 августа начинается, по уверению звезд, судьбоносный период в нашей жизни. Гармония Меркурия и Плутона, а также хорошее настроение Венеры сделают наш бизнес удачным, а личные отношения гармоничными. Не бойтесь говорить о своих намерениях и чувствах. Слова любви найдут кратчайший путь к сердцу любимого человека.***

**ОВЕН**
Активнее откликайтесь на происходящие события. Тогда и сами сможете извлечь из сложившейся ситуации больше пользы.

**ТЕЛЕЦ**
Критически анализируйте всю поступающую информацию. Нелепые обиды на окружающих могут притормозить ход дел.

**БЛИЗНЕЦЫ**
Вы проявите неплохую работоспособность, которая в сочетании с отличным настроением даст нужный результат.

**РАК**
Вы раздаете направо и налево обещания, не задумываясь о том, что их рано или поздно придется выполнять.

**ЛЕВ**
Лавры победителя достанутся тем, кому они вовсе не были предназначены. Вы будете очень болезненно реагировать на такую несправедливость.

**ДЕВА**
Не стоит оставлять без внимания поступки окружающих, особенно те, которые напрямую касаются лично вас.

**ВЕСЫ**
Забудьте старые обиды. Иначе то станет мощным тормозом в партнерских отношениях. Лучше найдите компромисс для непростой ситуации.

**СКОРПИОН**
Умерьте критику в адрес коллег, каждый имеет право на свое собственное мнение. Не вступайте в философские и религиозные споры.

**СТРЕЛЕЦ**
Не высовывайтесь со своей инициативой без особой нужды. Лучше поддержите инициативу деловых партнеров или начинания своей второй половины.

**КОЗЕРОГ**
Осторожно отнеситесь к новым знакомствам. Вы даже и не заметите, как вас виртуозно используют в корыстных целях.

**ВОДОЛЕЙ**
Вы цепляетесь за старое изо всех сил. А зря. Это мешает реализовать свои таланты и способности.

**РЫБЫ**
На этой неделе даже самые точные расчеты приведут к материальным потерям. Лучше сохраните то, что уже завоевано.

## Приметы

**17 августа**
Авдотья Огуречница. По этому дню определяли ноябрь.

**18 августа**
Евстигней Житник. На Евстигнея едят сырой лук с хлебом, солью и квасом, отчего бывают здоровы и имеют свежий вид лица.

**19 августа**
Яблочный Спас. На Яблочный Спас сухой день – к сухой осени, дождливый – к сырой, а ясный – к суровой зиме.

**20 августа**
День Марины. Если аисты готовятся к отлету, осень будет холодной.

**21 августа**
Мирон Ветрогон. Каков Мирон – таков и январь.

**22 августа**
День Матфея. Матфей ненастье подпускает. Осенний дождь летний перебивает.

**23 августа**
Лаврентий Зоречник. Коли вода в этот день в полдень тиха, не волнуется – осень будет тихой, а зима без злых метелей.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32; 2-13-77. 2-4.**

**ОАО «Моргаушавтотехсервис» требуются: инженер-строитель, оператор котельной, штукатуры-маляры, столяры, слесари по ремонту двигателей, пилорамщик, водители КамАЗ (категории Д, Е).**

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер. Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02. 1-3.**

**24 августа в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит распродажу обуви из натуральной кожи.**

**КПКГ «Агрокредит» предоставляет краткосрочные займы. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел.: 2-18-13. 3-10.**

**Организации требуются рабочие, мебельное производство. Тел.: 2-25-74. 1-8.**


Администрация Моргаушского района глубоко скорбит по поводу безвременной кончины председателя СХПК им. Ленина
**ГАВРИЛОВА**
**Андрея Владимировича**
и выражает соболезнование его родным и близким.

Администрация Моргаушского района глубоко скорбит по поводу безвременной кончины
**МОИСЕЕВА**
**Владимира Юрьевича**
и выражает соболезнование его родным и близким.

Отдел сельского хозяйства администрации Моргаушского района и райком профсоюза работников АПК глубоко скорбят по поводу трагической гибели председателя СХПК им. Ленина
**ГАВРИЛОВА**
**Андрея Владимировича**
и выражают соболезнование родным и близким.

Правление СХПК им. Ленина и администрация Хорнойского сельского поселения глубоко скорбят по поводу трагической гибели председателя СХПК им. Ленина
**ГАВРИЛОВА**
**Андрея Владимировича**
и выражают соболезнование родным и близким.

Муркаш райпо коллективĕ Тойкилтĕ ялĕнче магазин заведующийĕ пулса ĕçлекен Альбина Витальевна Андрееван тăван шăллĕ
**Андрей Витальевич**
**СМИРНОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Вулакан пултарулăхĕ

### Çĕр тĕрлĕ çын…

Çĕр тĕрлĕ çын,
Çĕр тĕрлĕ пурнăç,
Çĕр тĕрлĕ кулă пит çинче.
Çĕр тĕрлĕ савăнăç е хуйхă
Çырăнса юлнă кашнинче.
Çĕр тĕрлĕ пурнăç,
Çĕр шăпа.
Телейĕ те çĕр тĕрлĕ.
Пĕри телей тупать ĕçре,
Тепри пурнать ав ĕçкĕре.
Çĕр тĕрлĕ сас,
Çĕр тĕрлĕ кĕвĕ,
Çĕр тĕрлĕ юрă янăрать.
Çак кĕвĕпе вĕçетĕн эсĕ
Çунат çумне çунат хушса.
Çумра юратнă
Çын пулсассăн
Сăн-пит çинче шевле вылять,
Юлташ, тăван сана савсассăн
Çĕр тĕрлĕ юрă янăрать.

### Тав сана

Çĕр ĕçченĕ, тав сана,
Хăв ĕçӳсемшĕн тав,
Эс ӳстернĕ тыр-пула
Сăнатăп савăнса.
Тавах сире ăш çăкăршăн,
Тулли телейшĕн тав.
Хĕвелпе тăрса каçчен
Ырма пĕлменшĕн тав.
Тав тăвам пур ял-йыша
Пĕтĕм чĕререн.
Тулли пултăр кĕрекӳ,
Телейпе çӳре.
Çĕр ĕçченĕ, сан умра
Çĕре çити эп пуç таятăп,
Есĕ пиçĕхнĕ сăнна
Пăхса ытараймастăп.

**О. КЛЕМЕНТЬЕВА.**
Кĕçĕн Чураш.

## Ĕненекенсен кĕтесĕ

# Пан улми спасĕ

Хăй хĕрес çинче асапланса вилес кунĕсем çывхарнă май, Христос хăйĕн вĕренекенĕсене каланă: “Этем Ывăлийĕн нумай асап курмалла, аслă çынсем, пуп-пуçлăхĕсем Ăна йышăнмĕç, вĕлерĕç Ăна, Вăл виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăрĕ”. Вăл вăхăтра Христос халăха вĕрентме тухнăранпа виçĕ çул иртнĕ, Христос Хăй те 33 çул тултарнă.

Хăй асапланса вилесси çинчен калани апостолсене хуйха ӳкернĕ. Вăл вара, вĕсене хавхалантарас тесе, Хăй Турăлăх мухтавне кăтартас тесе шутланă. Çакăн хыççăн пĕр сакăр кунтан Галилейăри Фавор тăвĕ патне çынсем, каçкӳлĕм яланхи йăлипе Христос ту çине кĕл тума улăхнă. Хăйпе пĕрле Петра, Иакова, Иоанна анчах илнĕ. Вĕренекенсенчен аяккарах кайса, пĕр çӳллĕ тĕм çине хăпарса, кĕлтăва пуçланă.

Апостолсем виççĕш те çывăрса кайнă. Кĕлтунă чухне сăнĕ улшăннă, тумтирĕ шап-шурă, йăлтăртатса тăракан пулнă. Çав вăхăтра Ун патне Илияпа Моисей пророксем пĕри çăтмахран, тепри тамăкран тăрса тухса пырса тăнă. Вĕсем Христос Иерусалимра асапланасси пирки çинчен каланă. Апостолсем вăранса кайнă та, Турă сывлăшĕ систернипе, Илияпа Моисей пророксене палласа илнĕ. Вĕсем калаçнине чун хавалĕпе савăнса итлесе тăнă. Пророксем Христос патĕнчен кайнă чухне Петр апостол хăй мĕн каланине хăй те пĕлмесĕр Иисуса: “Вĕрентекен! Пире кунта тăма аван, эпир кунта виçĕ хӳшĕ: пĕрне сан валли, тепĕрне Моисей валли, тата тепĕрне Илия валли тăвар”, - тенĕ. Вăл яланах Моисейпа Илияна пĕрле пулса, вĕсем калаçнине итлесе савăнасшăн пулнă.

Таса чиркӳ çак кун иçĕм çырлине, пан улмине кĕлтуса пиллеме çирĕплетнĕ. Кивĕ сăмах вăхăтĕнчех турă Израиль çыннисене пулнă çимĕçсене чиркĕве илсе пырса пиллеттерме, пĕр пайне священниксем валли парса хăварма хушнă. Малтанхи христиансем те çак йĕркене çирĕп тытса пынă. Христос тĕнĕ Раççее Греци çĕрĕнчен килнĕ. Çавăнпа та кĕлĕ йĕркинче иçĕм çырли пиллес йĕрке пулнă. Раççейре иçĕм çырли ӳсменнипе пула, кунти пан улми, слива тата ытти çак вăхăта ĕлкĕрсе çитекен çимĕçсене пиллеççĕ.

Пророксем çинче çапла çырнă: “Эсĕ хăвăн аллу ĕçĕпе тăранăн, эсĕ телейлĕ, сана аван пулĕ”.

Ырă ĕç туни Туррăн куçĕ умĕнче хаклĕ çинчен пĕлтерсе, Рафаил архангел Тавита çапла каланă: “Турра тав туни Турă ятне аслăлани, Турă ырлăхĕ çинчен çынсене каласа пĕлтерни – ырă ĕç. Типĕ тытса кĕл туни, мĕскĕнсене пулăшни вилĕмрен хăтарать”.


**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3465.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 17.08.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.